Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* | 114 N (4683) | *1998 çулхи октябрь (юпа) уйăхĕн 7-мĕшĕ, юнкун* | *Палăртнă хакпа.*

## Оперативлă штабра

Администраци пуçлăхĕн çумĕ Ю.В.Терентьев ертсе пынипе ытларикун иртнĕ оперативлă штаб ларăвĕнче çанталăк условийĕсем сасартăк улшăннине шута илсе, уй-хирсенчи ĕçсене ирттермелли тактикăна улăштарас ыйтăва пăхса тухрĕç. [illegible]лтĕр чĕкĕнтĕр кăлакан комбайнсене çĕрлехи вăхăтра ĕçлеттерни пысăк усă панă. Кăçал та, каçхине кăшт шăнтсан, кăнтăрла вара тăпра ирĕлет, техникăпа иккĕмĕш сменăра тухăçлă усă курма тивĕ. Çавăнпа та комбайнсене тата ытти йышши техникăна хатĕрлессишĕн, хирте вăй хуракансем валли кирлĕ условисем туса парассишĕн малтанах тăрăшмалла. Çакă çĕртме сухалакан тракторсемпе усă курассине те тивет. Çапах та мĕнпур хуçалăхра икĕ сменăпа ĕçлесси çине куçман. Калăпăр, ку "Алга" хуçалăха тивет, унта тракторсем пĕр сменăпа кăна ĕçлеççĕ.

Чĕртавара йышăну пунктне ăсатассинче техникăпа тухăçлă усă курасси те - кун йĕркинчи тĕп ыйтусенчен пĕри. Сăмах чĕкĕнтĕре калкал турттарассине йĕркелесси, çаплах каялла пушăлла каймалли марри çинчен пырать - автомашинăсем минераллă удобренисем тиеме пултараççĕ.

Ю.В.Терентьев çаплах кукурузăна пухса илессине хăвăртлатас ыйтăва хускатрĕ, çакна май паха пуçĕсене упраса хăварассишĕн тăрăшмаллине палăртрĕ.

Штаб ларăвĕнче район ĕçĕ-хĕлĕн ытти пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйтăвĕсене пăхса тухрĕç, çав шутра пур çĕрте те котельнăйсене хута яма хушрĕç.



*"Чи шанчăклă та тăрăшуллă водительсенчен пĕри", - теççĕ хресченсен хуçалăхĕсен "Тан" ассоциацийĕнче Ильяс Исхакович Яруллин çинчен. 20 çул хушшинче ăна ăçта кăна пулма, мĕнле кăна тиев турттарма тÿр килмен пулĕ. Иртнĕ çулхи тĕп кăтартусемпе хуçалăхри шоферсем хушшинче Ильяс Исхакович ăнсăртран мар ĕнтĕ пĕрремĕш вырăн йышăннă. Кăçал та вăл çавăн пекех тăрăшса вăй хурать. Кирлĕ пулсан, инçетри рейссене те каять, ял хуçалăх ĕçĕсем хĕрсе пынă вăхăтра тырă турттарать, вырăх апачĕ хатĕрленĕ çĕре хутшăнать. Пирĕн фотокорреспондент Н.Азизов ăна симĕс масса турттарнă вăхăтра ÿкерсе илнĕ. Халь вăл сахăр кăшманне завода турттарать.*

## Çанталăк лайăхланасса кĕтмелли çук

### "Тухăç-98" пресс-группа пĕлтерет

Çанталăк лайăхланасса кĕтмелли çук, уй-хирти ĕçсене вĕçлеме вара нумай тăрăшмалла-ха. Çапла, ĕнерхи кун тĕлне сахăр кăшманне мĕнпур лаптăксен 63 проценчĕ çинчен кăларнă. Юлашки кунра "Надежда" агрофирмăра çак ĕçе 30 гектар çинче пурнăçланă, "Черемшан" тата Синдряков ячĕпе хисепленекен хуçалăхсенче - 20, "Рассветра" - 15, "Киклĕ" тата "Кондурча" ассоциацисенче - 10-шар гектар çинче. Завода пурĕ 23 пин тонна чĕртавар илсе килнĕ. Октябрĕн 4-мĕшĕнче чи нумай чĕкĕнтĕр "Кондурчаран" илсе килнĕ, вăл та пулин чи пылчăкли пулнă.

"Татарстан", Хафизов ячĕпе хисепленекен, хуçалăхсенче, "Черемшан" тата "Надежда" агрофирмăсенче ăçта пĕр пине яхăн гектар, ăçта ытла та çĕртме сухи тумалла, "Алгара" - 800 яхăн, сахăр завочĕн хушма хуçалăхĕнче - 500 гектар. "Надежда" агрофирмăра юлашки кунсенчен пĕринче 60 гектар ĕçлесе хатĕрленĕ ĕнтĕ. Ытти хуçалăхсенче те агрегатсем чарăнса тăман, юлашки икĕ хуçалăхра вара çĕртме сухи тунă лаптăксем хушăнман. Уйрăм хуçалăхсем валли уйрăм çанталăк çук, çавăнпа та мĕн пултарнă таран техникăпа çĕрлехи сменăра та усă курмалла. Кукурузăна 800 яхăн гектар çинчен пухса илмелле, ку уйрăмах "Надежда" агрофирмăра, "Татарстан", Хафизов ячĕпе хисепленекен, "Комбайн" хуçалăхсенче. Техника пур, кукуруза пуçĕсене концентрациллĕ апатлăх хумалла, пуçĕсемпе тунисене уйрăммăн пухса илме мĕнпур майсемпе усă курмалла.

Октябрĕн 1-мĕшĕ - ватă çынсен кунĕ кăна мар. Вăл нумай çул хушши пурнăçăн такăр мар сукмакĕсемпе иртнĕ хăйсен тантăшĕсемпе тĕл пулнă кун, çамрăклăх çинчен, иртнĕ пурнăç çинчен аса илнĕ кун.

Çав кун "Нурлат-Октябрьти аш комбиначĕ" АО столовăйĕнче 70 пенсионер ытла, пурнăçра хурашур сахал мар курнăскерсем, анчах малашне лайăх пуласса шанăç çухатманскерсем, пуçтарăнчĕç.

## ПИРЕ МАНМАРĔÇ

Администраци ятĕнчен Р.Х.Шайхутдинов тата профком ятĕнчен Ю.А.Набиуллин саламланă вăхăтра уяв сĕтелĕ хушшинче ларакан ватă çынсен питсăнĕ кулăпа çиçнине курма кăмăллăччĕ.

Илемлетсе хатĕрленĕ сĕтел хушшинчи тĕлпулу хаваслă та шавлă иртрĕ тата пире манманшăн, çак тĕлпулăва йĕркелеме май тупнăшăн комбинатăн генеральнăй директорне Роман Саввович Чахмахчева пурте чунчĕререн тав турĕç.

Вăл предприяти пенсионерĕсене яланах тимлĕ йышăнать, пире хĕрхенет тата май пур таран пулăшма тăрăшать.

Пире тимлĕх уйăрнăшăн ăна тав тăватпăр. Турă сывлăх патăр. Пысăк телей, ăнăçу сунатпăр.

**Аш комбиначĕн пенсионерĕсем.**

## Хаçат çырăнакансене пĕлсе тăма

1999 çулхи пĕрремĕш çур çула районта тухса тăракан "Дуслык" ("Дружба", "Туслăх") хаçата çырăнтарасси октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçланать. Хаçат хакĕ - **25 тенкĕ те 20 пус**; Аслă Отечественнăй вăрçа хутшăннисен тата инвалидсен, Афганистанра пулнă воин-интернационалистсен, ЧАЭС аварие пĕтернĕ çĕре хутшăннисен 50 процент кăна тÿлемелле (çирĕплетекен документсем пулсан).

Çав вăхăтрах хаçат çырăнакансене çакна та пĕлтерес тетпĕр - шел пулин те, финанспа пурлăх енчен йывăрлăхсем пулнипе район хаçачĕ пĕрремĕш çур çулта сахалтарах тухĕ: вулакан ăна эрнере иккĕ çеç илсе тăрĕ - юнкунсенче тата шăматкунсенче (юлашкинче - ТВ программи).

Кăçал çаплах хаçата йÿнĕ хакпа çырăнтарассине те пăрахăçлама тÿр килнине те ăнланмалла ĕнтĕ. Анчах та сирĕншĕн те, пирĕншĕн те кăмăллах мар пулнине пăхмасăр, эпир сире, хисеплĕ вулакансем, район пурнăçĕ çинчен малтанхи пекех тĕплĕн пĕлтерсе тăрăпăр тата эсир пирĕнпе, "Туслăхпа" юласса, ăна çырăнса илессе шанатпăр.

**Çапла, хаçат çырăнтарасси пуçланчĕ, çырăнтаракан пунктсене васкăр.**

**Хĕл çывхарать**

## Сăмах панипе çырлахмăпăр

Нурлатри райтопсбыт - кăмакана кăмрăк тата брикет хутса ăшăтакан çуртсенче пурăнакансене тивĕçтерекен пĕртен-пĕр организаци. Тĕрĕс ĕнтĕ, районта газ кĕртессипе ирттерекен ĕçсен калăпăшĕ пысăк пулнипе тивĕçтерÿ контингенчĕ сахалланать. Кăçал çак цифра чылай чакрĕ. Çапла, кăçалхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне çавăн пек 2964 çурт шутланнă пулсан, сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 2488 юлнă. Анчах, килĕшĕр, çак цифра та пысăк. Уйрăмах хальхи финанс енчен йывăр вăхăтра. Потребительшĕн чи ансат топливăна - кăмрăка турттарса килесси тата ăсатасси хăйне евĕрлĕ кăткăс. Пĕрремĕшĕнчен, кусем тÿлессипе çыхăннă. Çапла, пирĕн пата инçетри шахтăсенчен турттарса килекен 1 тонна кăмрăкăн хăйхаклăхĕ 400 тенке яхăн ÿкет. Паллах, халăх çавăн чухлĕ тÿлесе илеймест. Ăна тоннине 180 тенкĕпе сутаççĕ, çăмăллăхсемпе усă куракан потребительсене (вăрçа хутшăннисене, инвалидсене, афганецсене, чернобылецсене, вăрçа хутшăннисен çемйисене) 90-шар тенкĕпе. Ытти тăкаксене - кусем 70 процент - район бюджечĕ саплаштарать. Çапла майпа, кашни потребитель, лимитпа 2-шер тонна кăмрăк илнĕскер, адреслă социаллă хÿтлĕх шучĕпе район бюджетĕнчен 400-шер тенкĕ илнĕ пек пулса тухать. Анчах паян район бюджечĕ мĕнле шайра пулни никамшăн та вăрттăнлăх мар, çакăнтан вара халăха кăмрăкпа тивĕçтерессине чылай килет. Çапла, халăха 1600 тонна кирлĕ пулсан, райтопсбытран ăна 900 тонна панă, ăсатнишĕн те бюджетран 218 пин тенкĕ куçарман. Эпир такама айăпласшăн мар, лару-тăрăва çеç ăнлантаратпăр. (Çакăн пек йывăр вăхăтра та район бюджетĕнчен сайра-хутра пулин те укçа уйăрса параççĕ, теççĕ кантурта). Райтопсбыт директорĕ В.Н.Кузнецов шанăçне çухатмасть: "Кăçал эпир халăха кăмрăкпа туллин тивĕçтерĕпĕр. Ку енĕпе пысăк ĕç ирттеретпĕр: çитес кунсенче Воркутаран тата 5 вагон çитмелле". Сăмах май каласан, хальхи вăхăтра Воркута - пирĕнпе тачă çыхăну тытакан пĕртен-пĕр регион пулса тăрать. Акă тÿлеменнине пула Кемерово хулипе, Хакасипе ĕçлĕ çыхăнусене татма тиврĕ. Воркутапа вара пĕр-пĕрне шанса ĕçлетпĕр тата тавар тăратакансем умĕнчи тивĕçе сăмахпа кăна мар, ĕçре те пурнăçлама тăрăшатпăр.

- Потребительсем умĕнче те, - хушса хурать В.Н.Кузнецов. - Кăçал вĕсем топливăсăр юлмĕç. Ертÿçĕ панă сăмах çирĕп пуласса шанатпăр.

**С.ХАЙРУЛЛИНА.**

Шухăш

# Малтан вăрçнă пулсан, халь вара мухтамалла

Çак заголовок патне икĕ çул каярах ыйту палли лартмаллаччĕ пулĕ, халь вара вырăнлă мар. Политэкономи теоретикĕшĕн, чăн-чăн пурнăçа курма пĕлекенскершĕн, çакă кулăш, темиçе миллионшар ахаль гражданесемшĕн вара - пурăнмалли пĕртен-пĕр меслет. Калаçу ĕç укçи çинчен пырать, тĕрĕсрех каласан çак практика халь пĕтĕм çĕртре анлă сарăлнă, унăн парăмне таварсемпе парса татасси. Çапла, кашни çыннăн ĕçлесе илнĕ укçине илмелли конституци правине пăснине пысăк телей вырăнне хуракан вăхăтсем те çитрĕç. Ку татах-ха ученăйсене шухăшламалăх кăна, практикăра вара мĕнле? Хальхи финанспа экономика кризисĕн условийĕсенче Нурлатри предприятисенче ĕçлекенсен тĕлĕшпе социаллă хӳтлĕхĕн мĕнле мерисене йышăнаççĕ?

Нурлат хулинчи чи пысăк предприятисенчен пĕринче, **сахăр заводĕнче,** ĕç укçи шутĕнчен çăкăр, сахăр, сĕт (юлашки вăхăтра пама чарăннă), хăйма, çăнăх, аш параççĕ. Промышленность таварĕсем памаççĕ, маларах хăйсен складĕнчен строительство материалĕсем те панă. Укçан аванс паркалаççĕ, тĕслĕхрен, иртнĕ эрнере пĕрер пин панă.

**Машинăсем туса кăларакан завод** юлашки 2-3 çул хулана газификацилес тĕлĕшпе ĕçлет, сарлака илекен культиваторсем туса кăларать. Кунта ĕç укçи шучĕпе апат-çимĕç те, промышленность таварĕсем те параççĕ, кĕпе-йĕм çумалли порошокран тытăнса сĕтел-пукан таранах. Ведомствра тăракан хваттерсен тӳлевне те ĕç укçинчен тытса юлаççĕ, хваттер укçине те пĕрпĕрин хушшинчи расчетсен шучĕпе куçарас теççĕ. Май пур таран сывлăх сиплевĕн мероприятийĕсем валли те укçа уйăрма тăрăшаççĕ, çав шутра уйрăмах кирлисене санатори-курорт сиплевĕ валли те.

**"Нурлатгаз" ЭПУ**ра ĕç укçине уйăхран уйăха тенĕ пекех параççĕ. Сентябрь уйăхĕн вĕçĕнче акă август уйăхĕшĕн панă. Çавăнпа та кунта "натурăпа тӳлессипе" усă курмаççĕ. Кунти ĕçченсем "санаторисенче" те канаççĕ. Кăçал пĕр çын Сочине кайса килнĕ, тепри - Туапсене, иккĕшĕ - çывăха кăна, "Васильевский" санаторие, хăшĕ вара нефтяниксен вырăнти санатори-профилакторийĕнче хăйсен сывлăхне çирĕплетнĕ. Укçа-тенкĕ ăçтан тупаççĕ? - тĕлĕнтĕмĕр эпир. Пĕрремĕшĕнчен, тӳлевсем лайăх пуçтарăнаççĕ, иккĕмĕшĕнчен вара "Трансгаз" предприяти пулăшать.

**Сĕт-çу комбинатĕнче** те ĕç укçи вăхăтлă парайманнипе ӳпкелешмеççĕ, икĕ уйăха яхăн тытса тăнине чăтма пулать. Апат-çимĕç карточкисемпе пенсионерсене çеç тивĕçтереççĕ.

**Аш-какай комбинатĕнче** ĕçсем урăхларах. Кунта ĕçлекенсене апат-çимĕç парассине йĕркеленĕ, тĕпрен илсен, паллах ĕнтĕ, аш тата аш продукчĕсем (магазин хакĕпе), паха сортлă çăнăх - сентябрĕн 1-мĕшĕччен миххине 90 тенкĕпе, халь вара - 100 тенкĕпе. Сывлăх сиплевĕн тĕллевĕсемшĕн укçа-тенкĕ кăçал уйăрман.

**Нурлат хулинчи типографин директорĕ** бартерпа "парти" вăхăтĕнче тенĕ пекех усă курма пуçланипе мăнкăмăлланма пултарать. Икĕ уйăх ĕç укçи паманнине кунти ĕçченсем бюджетниксем пекех туймаççĕ, çук-çук та аванс паркалаççĕ, ĕç укçи шучĕпе хваттерсем çеç илмеççĕ пулĕ. Полиграфи продукцийĕшĕн вара апат-çимĕçпе, кĕпе-йĕм çумалли хатĕрсемпе, сĕтел-пуканпа, улма-çырла йывăççисен хунавĕсемпе тата ытти услугăсемпе расчет тăваççĕ. Хваттерсемшĕн тата коммуналлă тӳлевсене те пĕр-пĕрин хушшинчи расчет шутĕнчен пурнăçлаççĕ. Кăмăл пулсан ĕçлекенсене санаторисемпе курортсене сипленме яраççĕ.

**Геофизика ĕçĕсен Нурлатри управленийĕ** ĕç укçи паманни çур çул çитет ĕнтĕ. Апла пулин те апат-çимĕç парассине кунта икĕ эрне каялла çеç йĕркелесе янă - ыйтăва пĕрлешӳ урлă татса памалла пулнă. Апат карточкисем хатĕрленĕ, заявкăсемпе килĕшӳллĕн промышленность таварĕсем илсе килеççĕ, строительство материалĕсем параççĕ, ведомствора хваттерсен тӳлевне ĕç укçи шутĕнчен тытса юлаççĕ.

Пĕтĕм енчен япăх лару-тăру **Нурлатри ăшă сечĕсен предприятийĕнче** шутланать пулĕ (ертӳçĕ сăмахĕсем тăрăх). Ĕç укçи парăмĕ кунта кивĕ укçапа пĕр миллиард тенке çитнĕ. 28 çынна кĕскетмелли список та хатĕр. Апат-çимĕç памаççĕ, бартер тума май пуррисен хăйсен котельнăйсем пур. Тӳлев питĕ начар пуçтарăнать, çав шутра халăхран та. Кăçалхи сезон питĕ йывăр пулĕ, чи малтанах ăшă сечĕсен предприятийĕ газпа тивĕçтернĕшĕн пысăк парăмлă пулнипе. Иртнĕ уйăхшăн ĕçченсене райфо урлă ĕç укçи пама калаçса татăлни çеç шанăç кӳрет...

Юлашкинчен (ку материалăн малалли те пулать-ха) нумаях пулмасть редакцире пулнă пĕр хĕрарăмăн сăмахĕсене илсе кăтартас тетĕп. Хушамачĕпе ĕç вырăнне кăтартмăп, унăн "нимĕн те хăрамалли çук ĕнтĕ" терĕ пулсан та. Ку вăл пурнăçра шанăç çухатнă çын чун-чĕри ыратнипе каланă сăмах:

*"Ĕç укçи чылай уйăх параймannипе кăмăлсăр пулнине пĕлтерсе, çитес çывăх вăхăтра хăшĕпĕрин çимелли те нимĕн те юлмасть ĕнтĕ тесен, директор пире: "Вĕлтĕрен çийĕр!" - тесе татса хучĕ. Эпир ăна усал сунмастпăр вĕт-ха, ан тив, хăйĕн çĕнĕ çуртне хăпарттăр, капăрлаттăр, анчах та рабочисем çинчен те шутламалла. Ытти çĕрте çынсене мĕн те пулин параççĕ, пирĕн вара ĕç укçи те, нимĕн те çук. Мĕнле пурăнмалла-ха? Çĕруями пулсан аптрамăпăр терĕм, çу тăрăшĕпех дачăра чакалантăм. Вăл та начар тухрĕ. Кивçен те никамран та илме çук - хăйсен те сахал. Эпĕ вара сахăр диабечĕпе чирлĕ, апат та калориллĕ пулмалла, эмелсем те ялан кирлĕ. Нимĕн те çук. Çак пурнăçра маншăн вилĕмрен лайăххи нимĕн те çук тесе шутлатăп"...*

Мĕн каламалла-ха? Çынсене йăпатни çеç çителĕксĕр - вĕсене ĕçлесе илнĕ укçа кирлĕ. Начальниксем хăйсем тутă та хătлă пурăннипе вĕсене ăнланмаççĕ. Укçа халь - хут, анчах та çыннăн пурнăçĕ çавăнтан килет вĕт.

Д.ТЯМАЕВА.

АКТУАЛЛĂ

# Сахал мар тунă, анчах ыйтусем пур-ха

**Сентябрь уйăхĕн вĕçĕнче сасартăк сивĕтнĕ май редакцие часчасах шăнкăравлама пуçларĕç: "Хăçан ăшă параççĕ?"**

**Паллах, ăшă урăххисем параççĕ, эпир посредниксем çеç. Çавăнпа пирĕн корреспондент администраци пуçлăхĕн çумĕпе Р.Г.Билаловпа тĕл пулса, унран çак тата ытти хăш-пĕр ыйтусем çине хуравлама ыйтнă.**

***- Равиль Габдрахманович, "Сельхозтехника" микрорайонĕнчен янă çыруран пуçлар. Çак микрорайонта пурăнакансем кашни хĕл ăшăсăр тарăхни çинчен пурте пĕлеççĕ. Кăçалхи çуркунне ку тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнасси пирки хаçатра пĕлтернĕччĕ. Çапах та улшăнусем сисĕнмеççĕ...***

- Чи малтан, хулан ытларах пайне ăшăтакан ăшă сечĕсем ĕçлеме тытăнас ыйтăва татса параймanni çинчен каламалла. Тĕрĕс, хăй предприяти ăшăтмалли сезон тĕлне хатĕрленнĕ, анчах газшăн пысăк парăм пулнипе "Лениногорскгаз" ЭПУ крана уçма хушман. Паллах, парăмсене хăвăртрах тӳлесе татмалла, анчах вăхăт кĕтмест, ăшă паянах кирлĕ. Çавăнпа та район ертӳçисем мĕнпур яваплăха хăйсем çине илчĕç. Çак кунсенче НПТСăн мĕнпур котельнăйĕсем ĕçлеме тытăнчĕç.

"Сельхозтехника" микрорайонне илес пулсан, çуркунне унăн котельнăйне предприятин промбазине çеç хăварса, пурăнмалли фонда 2-мĕш ПТС (машзавод) котельнăйĕн ăшă трассипе сыхăнтарма решени йышăннăччĕ. Анчах çапла палăртнăччĕ кăна, чăннипех урăхла пулса тухрĕ: çак ĕçсене финанслама тивĕçлĕ "Сельхозтехника" пачах панкрута тухрĕ, укçасăр юлнипе каллех йывăрлăхсем тухса тăчĕç. Анчах алă усса ларман, тĕрлĕ майсемпе укçа-тенкĕ шыранă, ПТС парăмçисене тупса, вĕсен шучĕпе ĕçсен пысăк пайне пурнăçланă - бойлер, çĕнĕ хуран вырнаçтарнă. Ăшă трассин ытларах пайне хывнă, çуртсене çыхăнтарма темиçе кун та çитет. Çак кунсенче финанс ыйтăвне те татса парасса шанатпăр.

Ытти котельнăйсем çинчен. Котельнăйсем пур çĕрте те хатĕр. Чи малтан сахăр вĕретекенсен çурчĕсене ăшă панă. Паян НГЧ, геофизикăн, хатĕрлев кантурĕн, 547-мĕш ПМК котельнăйĕсене хута янă.

***- Тепĕр ыйту Хĕвелтухăç (СПТУ) микрорайонĕнче пурăнакансенчен килчĕ. Паянхи кун тĕлне кунта 40 яхăн çемье пурăнма пуçланă, анчах çуртсене электрификацилемен, çуртасемпе усă кураççĕ. Эсир пирĕн хаçата панă интервьюра çак ĕçе организацисене хушнă тата ыйтăва татса пама тивĕçлĕ терĕр...***

- Çапла, хушнисем тăрăшрĕç. Хула сечĕ трансформатор подстанцине вырнаçтарчĕ, пысăк тата пĕчĕк напряжениллĕ электропередача линийĕсене 2 километр тăршшĕ тăсрĕ. Ĕç чарăннин сăлтавĕ - трансформатора хускатма Чистайран ирĕк паманни. Хусантан ирĕк панă хыççăн та-ха чистайсем электричество счетчикĕ вырнаçтарса лартма ыйтрĕç. Ĕç вара татах укçара. Çапах та çак ыйту пысăк чăрмав пулса тăмĕ тесе шутлатăп. Счетчикне вырнаçтарăпăр, ыттине тума вара пĕр-икĕ кун çеç кирлĕ.

***- Равиль Габдрахманович, йăлапа коммуналлă условисем тăвасси хулари çĕнĕ микрорайонсемшĕн кăна мар, час-часах киввисемшĕн те йывăр ыйту шутланать. Хулан пĕрлехи планне кĕртнĕ мероприятисенчен хăшĕсене пурнăçланă?***

- Мĕнле йывăр вăхăт пулсан та, хула çыннисен пурнăç условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе мерăсем йышăнаççĕ. Çапла, аэропорт микрорайонне артезиан шывĕ кĕртнĕ, çитес çывăх вăхăтра вăрман склачĕн вăйĕпе çуртсене газ кĕртĕç. Тата тепĕр япала çинчен уйăрммăн каламалла: кăçал хулари чи япăх çулсене, таса мар участоксене юсассине пысăк тимлĕх уйăрнă. "Нурлатнефть" НГДУ финансланипе НУАД Советская урамне йăлтах юсаса çĕнетет, нефтьпе газ кăларакан управленин кантурĕ патĕнчен тытăнса: 9 метрлă автотрассăна 12 метра çити анлăлатнă, çĕнĕрен асфальт хунă, бордюрсем вырнаçтарнă, тротуарсене юсанă, çутă çунать.

"ТатРИТЭКнефть" НГДУ Космонавтсен урамĕнче çул тунă. Зуеевăри нефть промысли финансланипе ДРСУ Промышленный тăкăрлăкĕнчи 5 хутлă çуртсем патĕнчи территорие асфальтланă. Тата çавăн пек пылчăклă темиçе вырăна юсанă: вакчул сарнă, асфальт хунă. Кунта ĕнтĕ, паллах, РСУ нумай ĕçленĕ: сахăр вĕретекенсен, чугун çул ĕçченĕсен микрорайонĕсенчи çул-йĕре юсанă, тротуарсем тунă, Нефтяниксен урамĕнче çула анлăлатса асфальт хунă ("Нурлатнефтешырав" укçа-тенкĕпе пулăшнипе) тата ытти те.

***- Дружба урамĕнчи пĕр участок вара çаплипех юлнă. Унта кунĕпе çĕр-çĕр çын иртет...***

- Эпир çак çула юсас тĕлĕшпе "Нурлатнефть" НГДУ çине шаннăччĕ, анчах та кăçал вĕсем çак участока юсама вăй çитереймеççĕ пулас. Çак çула вара тĕпрен юсамалла, çавăнпа та кунта ĕç нумай. Çĕнĕ сезон тытăнсан Дружба урамне юсасси чи малтан пурнăçламалли мероприятисен планĕнче пулĕ.

***- Кĕскен каласан, çуллахи вăхăтра нумай ĕç тунă, çапах та татса памалли ыйтусем чылай-ха. Мĕнле пулсан та, влаçсем халăха хĕлле çутăсăр тата ăшăсăр хăвармасса шанатпăр.***

**Ф.ГАЛИМОВА калаçнă.**

**P.S. Хаçата пичетленĕ вăхăтра газ пама Хусантан ирĕк панă.**

# Больницӑри пекех

* Эсир илтнӗ-и?

Хулара кӑнтӑрлахи стационар уҫни апатҫимӗҫпе валютӑн юлашки шавӗ вӑхӑтӗнче пачах сисӗнмесӗр иртрӗ. Кӑлӑхах. Кунта МСО администрацийӗн ҫурчӗн пӗрремӗш хучӗн сулахай енне йышӑнакан стационарта чирлисене питӗ тимлӗ йышӑнаҫҫӗ, пӑхаҫҫӗ, кирлӗ пек сиплеҫҫӗ. Тӳлевсӗр теме ҫук: эмелсене хӑвӑн укҫу-тенкӳпе туянмалла. Халлӗхе вӗри апат та ҫук-ха. Чейпе - витаминсемпе, вӑя ҫирӗплетекен тӗрлӗ курӑк чейӗпе вара ыйтмасӑрах тивӗҫтереҫҫӗ... Вӗсене тӗрӗсленӗ.

Районти тӗп больница ертӳҫисен кӑнтӑрлахи стационар уҫас шухӑш тахҫанах пулнӑ: вырӑн шыранӑ, штат расписанийӗ тата ытти ҫинчен шухӑшланӑ. Альфия Шафигулловна Сулейманова врач-терапевт кунта питӗ вырӑнлӑ пулнӑ. Хӑй вӑл кунтисем, анчах та ҫемйипе чылай ҫул хушши Казахстанта пурӑннӑ. Актюбари клиника больницинче ӗҫленӗ, Уральскри медколледжра вӗрентнӗ. Вӑл, питӗ хастар та ӗҫченскер. Лидия Селезневапа Фания Фатхуллина медсестрасемпе тата Зульфия Кабирова санитаркӑпа пӗрле стационара уҫиччен уйӑх ҫурӑ хушши вӗсем кунта тасатнӑ, сӗрнӗ, сӑрланӑ, сӗтел-пукан вырнаҫтарнӑ, тӗкӗрсемпе гардинасем ҫакнӑ, физкабинетпа процедурнӑя комплектланӑ, чӳлмексене герань, лили тата фиалка чечекӗсене лартнӑ, ӗҫ режимне тунӑ тата ытти те... Кунта вӗсене МСО председателӗ Р.М.Карама пулӑшнӑ: ӑшӑтакан батарейӑсем вырнаҫтармалла, алӑксемпе рамӑсене юсамалла, ҫӑрасем лартмалла пулнӑ. Альфия Шафигулловна тата унӑн пӗчӗк коллективӗ спонсорсем пулӑшасса питӗ шанаҫҫӗ, анчах та хальлӗхе ырӑ ӗҫ тума питӗ йывӑр ҫав. Вӗсем чӳречесене илемлӗ карӑсем карсан, стенасене ҫӗнӗ шпалер ҫыпӑҫтарсан лайӑх пулмалла тесе шутлаҫҫӗ. Палас, ҫемҫе сӗтел-пукан, журнал сӗтелӗ, телевизор та вырӑнлӑ пулмалла... халлӗхе кунта телефон та ҫук-ха. Ҫитменлӗхсене пӑхмасӑр вӗсем фитобар тата аптека пункчӗ, йывӑҫ кравацсемпе коридор тӑрӑшшӗпе сарнӑ вӑрӑм дорожкӑсем ҫинчен ӗмӗтленеҫҫӗ. Тен, чӑннипех спонсорсем тупӑнӗҫ. Ҫакна вара вӗсем питӗ шанаҫҫӗ.

Кӑнтӑрлахи стационарта 20 койка. Сипленнисем те пур ӗнтӗ. Кунта полиартрит тата ытти чирсемпе асапланакансем пыраҫҫӗ. Вӗсене кунта районти тӗп больницӑран яраҫҫӗ. Ҫумра ҫаплах паспорт, страхполис, анализсен результачӗсем пулмалла. Тӗпрен илсен, сахӑр вӗретекенсемпе строительсем ирхине пыраҫҫӗ те кирлӗ сиплев илеҫҫӗ. Вӗсене кашни кун тӗплӗн тӗрӗслеҫҫӗ, анализсене тишкерсе тухаҫҫӗ. Стационарта вӑрҫӑ инваличӗсемпе ӑна хутшӑннисем тата медицина ӗҫченӗсем валли ятарлӑ палатӑсем пур. Медикаментсене хӑйсемпе пӗрле илсе килеҫҫӗ, анчах та васкавлӑ кирлӗ пулсан, вӗсен пӗр хутчен укол тумалли шприцсем, димедрол, эуфилин, строфалетин тата ытти препаратсем пур.

Процедурнӑйра, ытти ҫӗрти пекех, йӗркелӗх тата тасалӑх хуҫаланать. Стационарта шӑп, ҫакӑ вара чирлӗ ҫынсемшӗн питӗ кирлӗ.

Медицина ӗҫченӗсем те кунта опытлӑ, хӑйсен тивӗҫӗсене лайӑх пӗлекенскерсем, ҫакӑ вара питӗ пысӑк пӗлтерӗшлӗ.

Районти тӗп больницӑн тӗп врачӗ А.Л.Клементьев каланӑ тӑрӑх, ҫакӑн евӗрлӗ кӑнтӑрлахи стационарсем медицина енчен тивӗҫтерессине аталантарма, лайӑхлатма пулӑшаҫҫӗ. - Тутарстанта хӑш-пӗр хуласенче ҫакӑн пек меслетпе усӑ кураҫҫӗ. Ун пекки пирӗн патра та ӗҫлеме тытӑнчӗ. Ҫавӑн пеккисене ялсенче уҫма шутлатпӑр.

* * *

Тав туса тата ҫитменлӗхсене ҫырнӑ кӗнекерен:

*"Эпир врача тата медицина сестрисене пирӗнпе, чирлисемпе, тимлӗ пулнӑшӑн тав тӑватпӑр. Стационар малашне те ӗҫлессе шанатпӑр.*

*Мухаметов, Багаутдинов. Сентябрӗн 11-мӗшӗ"*

**Т.АЛЕКСЕЕВА.**





Н.Азизов ӳкерчӗкӗсенче: стационар коллективӗ; хӑтлӑх коридортан пуҫланать.

# Ачасен сывлӑхӗшӗн тӑрӑшасси - пӗрремӗш планра

1998-1999 вӗренӳ ҫулне Тутарстанта ачасен сывлӑхӗшӗн тӑрӑшмалли ҫулталӑк пулни ҫинчен палӑртнине пурте пӗлетпӗр ӗнтӗ, ку вара физкультурӑпа спорт занятийӗсенчен чылай килет, ҫавӑнпа та физкультура учителӗсен кӑҫал вӗренекенсен сывлӑхне ҫирӗплетес тӗлӗшпе ҫине тӑрса ӗҫлемелле пулать. Кӗскен каласан, пӗлтӗр те ДЮКФП тата РОО ачасен спорт шкулӗ ҫак ыйтӑва пысӑк тимлӗх уйӑрчӗҫ. ДЮКФП бази ҫинче районта 30 яхӑн ӑмӑрту ирттерчӗҫ, район спортсменӗсем республикӑра иртнӗ 15 ӑмӑртӑва хутшӑнчӗҫ. Ҫак спорт мероприятийӗсем тӗлне тӗплӗн хатӗрленме тӳр килчӗ. Кунта шкулсенчи физкультура учителӗсемпе ДЮКФП ӗҫченӗсене чылай вӑй хума тӳр килчӗ. ДЮКФП кӑна (ертӳҫи Ф.С.Гайнуллин) 500 яхӑн ача ҫӳрет. Ачасен сывлӑхне ҫирӗплетес тесе хулари шкулсен физкультура учителӗсем В.Трофимов (4-мӗш номерлӗ шкул), Ю.Кочетков (4-мӗш номерлӗ шкул), В.Севастьянов (2-мӗш номерлӗ шкул) тата ыттисем тӑрӑшса вӑй хураҫҫӗ. Ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулӗ умӗн физкультура учителӗсемпе ирттернӗ ларура эпир ачасен шучӗ ӳснипе спорт ӑмӑртӑвӗсене хулари тата ялсенчи шкулсем хушшинче уйӑрӑмшар ирттерме йышӑнтӑмӑр. Ҫаплах, кустсенче ирттерекен ӑмӑртусене те пысӑк тимлӗх уйӑрмалла. Ачасен сывлӑхӗшӗн тӑрӑшас ыйту пӗрремӗш планра тӑмалла.

**А.НАБИУЛЛИН,**
**РОО методисчӗ.**

## Редакци почтинчен

# Чун-чӗрипе яланах ҫамрӑк

Альфия Раузетдинована урамра курсан, кашнинчех ҫак сӑмахсем аса килеҫҫӗ. Вӑл малтанхи пекех ялан хаваслӑ та вӑр-вар, ватӑла пӗлмен пек туйӑнать. Вӑл ыттисене те хавхалантарма тӑрӑшать. "Сывлӑх кӑна пултӑр, вӑл пулсан ытти пулать. Ӗҫ тата ҫынсем хушшинче пулни - пысӑк телей", - тесе шутлать Альфия Раузетдинова. Кӗскен каласан, вӑл нимӗнле ӗҫрен те хӑрамасть. Хӗлле выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетнӗ ҫӗрте чи яваплӑ участокра - пӑрулаттаракан уйрӑмра, ҫулла вара чӗкӗнтӗр хирӗнче ӗҫлет. Тырпул пухса кӗртнӗ вӑхӑтра йӗтем ҫинче вӑй хурать. Тӳрӗ кӑмӑлпа, ырми-канми ӗҫленӗшӗн Альфия Раузетдинована пӗр хутчен кӑна мар хаклӑ парнесем панӑ. Вӑл мӗнпур йывӑрлӑхсене ҫӗнтерме вӑй-хӑват ҫитерет. Пурне те тӳрӗ кӑмӑлпа пурнӑҫлать. Хӑйӗн ачисене те вӑл ӗҫе хӑнӑхтарса, вӗрентсе ӳстернӗ. Вӗсен хӑйсен ачисем ӳсеҫҫӗ ӗнтӗ. Икӗ ывӑлӗ Ҫыранҫи Чаллӑ хулинче пурӑнаҫҫӗ, хӗрӗ Алия - кӳршӗри Элмет ялӗнче. Вӗсем пурте килӗштерсе, туслӑ пурӑнаҫҫӗ, ашшӗпе амӑшӗшӗн вара ҫакӑ чи пысӑк телей. Альфия аппан мӑшӑрӗ кӑмака тӑвакан ӑстаҫӑ. Вӑл хӑйӗн тивӗҫӗсене тӑрӑшса, тӳрӗ кӑмӑлпа пурнӑҫлать: ирхине ирех ҫамрӑк пӑрусем валли сӗт илсе килет. Акӑ ҫапла пурӑнать тата ӗҫлет пирӗн Альфия аппа, вӑл вак-тӗвекшӗн те савӑнма пӗлет.

**З.ИСМАГИЛОВА.**
**Кӑчӑканлӑ ялӗ.**

# Пирӗнсӗрех татса панӑ

Юлашки вӑхӑтра Анат Нурлат ялӗн шӑпине унта пурӑнакансенчен ыйтмасӑрах татса пама тытӑнчӗҫ. Сӑмахран, акӑ нумаях пулмасть пирӗн хуҫалӑхӑн 9 гектар ҫӗрне масар тума панӑ. Эпӗ вара ҫакна тӗрӗс мар тесе шутлатӑп. Кунти ҫӗр лайӑхах мар пулин те, унта улмаҫырла ӳстермелли участок тума пулатчӗ. Ҫакӑ экологипе тата санитарипе гигиена енчен те усӑллах мар. Масара уҫас пулсан, вилтӑпри ҫинчи шыв Хӑнтӑрча юханшывне юхса анать вӗт. Нивушлӗ химбаза территорийӗ ҫумӗнчи ҫӗрсӗр пуҫне масар тума урӑх, меллӗрех, лайӑхрах вырӑн тупма ҫук-ши?

**Т.АЛЯКИМОВА.**

# Еткерҫӗсен пурнӑҫӗнчи пӗр кун

Тутарстан еткерҫисен Союзне йӗркеленӗренпе сентябрӗн 15-мӗшӗнче 8 ҫул тулчӗ. Ҫак кун вожатӑйсемшӗн ҫеҫ мар, ача чухне пионер пулнисемшӗн те питӗ хаклӑ. Кӑҫал эпир, Тутарстанӑн хальхи еткерҫисем, хамӑрӑн уява Ҫарӑмсан юханшывӗн ҫыранӗ хӗрринчи илемлӗ вырӑнта ирттерме шутларӑмӑр. Юрӑ юрласа ҫула тухрӑмӑр. Вырӑна ҫитсен кӑвайт чӗртрӗмӗр. Уяв ячӗпе ирттернӗ чаплӑ линейкӑра иртнӗ ҫулхи ӗҫ итогӗсене пӗтӗмлетрӗмӗр, малашнехи задачӑсем палӑртрӑмӑр, 7-мӗш класра вӗренекенсене чи активлисем тесе пӗлтерчӗҫ (кунта класс руководителӗн Гульнара Исмагиловна Бильданован тӳпи те сахал мар).

Линейка хыҫҫӑн ачасем тӗрлӗ вӑййӑсемпе ӑмӑртусене хутшӑнчӗҫ. Кунта 6-7 классенче вӗренекен еткерҫӗсем уйрӑмах палӑрчӗҫ. Вӑхӑт сисӗнмесӗрех иртсе кайрӗ, каялла таврӑнмаллаччӗ. Ачасен пит-куҫӗсем кулӑпа ҫиҫрӗҫ, кӑмӑлӗсем ҫӗкленӳллӗччӗ, апла пулсан кун ахаль иртмерӗ.

"Кашни кун - усӑллӑ ӗҫре", - шӑп кӑна ҫакӑн пек девизпа пурӑнаҫҫӗ тата ӗҫлеҫҫӗ Тутарстан еткерҫисем, ҫакӑ вара пире малашне тата та туслӑрах, активлӑрах пулма хистет.

**Кислеври вӑтам шкулти "Смена" дружина членӗсем.**



Килĕшет-и?

## Курни-илтни

- Аннеçĕм, эпĕ алсиш çыхрăм!
- Ай, епле хитре... Шел, иккĕмĕшне çыхма çăм çук...
- Эпĕ кăна сӳтетĕп те теприне çыхатăп.

* * *

- Мĕншĕн эсĕ аннӳне пулăшмастăн?
- Пулăшатăп: паян вăл ман портфеле пуçтарчĕ, эпĕ ăна уроксен расписанине каласа çыртартăм.

* * *

- Мĕншĕн эсĕ манран çырса илетĕн? Манăн иккĕмĕш вариант-çке.
- Эсĕ мĕн сĕнесшĕн? Санăн урăх вариант çук вĕт?!

# Ывăл наркотикпа усă курать пулсан мĕн тумалла?

Врач шухăшĕ

Пирĕн кашнин ăстăн шайĕ тĕрлĕрен, пиртен кашни тенĕ пекех пурне те хăй тĕрĕслесе пăхма, кашни япалан хакне пĕлме тăрăшать. Пурте - пирĕн таврара пулса иртни, пире хупăрласа тăракан мĕнпур япала - çаксем кулленхи пулăмсем.

Этем кăштăс пухсан, чылай япала палăртнă концентратсемпе пирĕншĕн питĕ сиенлĕ пулнине ăнланать. Табак, алкоголь тата наркотиклă веществосем этем организмне хуллен, çулсем иртнĕ май сиен кӳреççĕ.

Çамрăк çын яланах хăйне сиенлетме май çук тесе шутлать. Вăл хăй нихăçан та чирлемĕ, унпа инкек пулмĕ, нихăçан та вилмĕп тесе шутлать, çавăнпа та вăл мĕнпур енчен тĕрĕслев иртет. Хальхинче ĕç кăмăл вылянчăкне тивет. Çапла майпа çамрăксем хăйсем шутламан хăрушлăха лекеççĕ. Кунта вара чи илĕртӳллисенчен пĕри вăл наркотик. Эпир çамрăк çын мĕн хăтланнине час-часах сăнатпăр та кайран вара ăна мĕнле чармаллаши тесе шухăша каятпăр. Ачасем час-часах наркотикпа усă кураççĕ, çакна вĕсем: "Ку мана хăрасран, хама вăйлă туйма пулăшать", - тесе ăнланаççĕ. Пурте хăранинчен тытăнать, кайран вара пачах урăхла. Этем хăранине мĕнле çĕнтермеллине пĕлмен, мĕншĕн тесен ăна хăрамалла мар тесе никам та вĕрентмен - ашшĕпе амăшĕ те, педагогсем те, ача садĕнче те. Пĕлӳ парассине çеç тĕп тимлĕх уйăрнă. Кунта вара нимĕнле эксперимент та кирлĕ мар.



Ачасенчен чылайăшĕ аслисем вĕсене. ăнланманнине туяççĕ, сисеççĕ, пĕлеççĕ. Ачапа калаçма, ăна ăнлантарма вара хăйĕн нумай пĕлмелле. Хăшпĕр чухне: "Эсĕ ăнланмастăн" тесе хуравланине те илтме пулать. Апла пулсан, вĕсем пĕрпĕринпе килĕштерсе калаçмаççĕ. Çыхăну çук.

Ача наркотиксемпе усă курма, табак туртма, эрех ĕçме тытăнчĕ пулсан, мĕн тумалла? Чи малтан, унпа хăйĕнпе калаçса, сăлтавĕ мĕнре пулни çинчен ыйтса пĕлме тăрăшмалла. Ашшĕпе амăшне ача шăпи пăшăрхантарать пулсан, вĕсем ачипе мĕн мĕн пулса иртнине пĕлес тесен вăхăт та, май та тупма пултараççĕ. Эпир хамăран ачасемшĕн яваплă пулни çинчен манмалла мар. Анчах та яланхи пурнăçра эпир яваплăха час-часах милици тата педагогсем çине йăвантаратпăр. Çавăнпа та ачапа мĕн пулса иртнине палăртмалли самант иртсе кайнине те сисместпĕр. Çакă вара питĕ пăшăрхантаракан факт сăлтавĕ пулса тăрать.

Çавăнпа та пĕр-пĕринпе уççăн тата тӳрĕ кăмăлпа калаçмалла, ачасем хăть мĕне те хăйсем суйласа илме пултарнине ăнланмалла.

**С.ФЕДОТОВ,**
**районти тĕп больницăн врач-наркологĕ.**

# Купăста пуçĕ çурăласран

Чăнах та купăста пуçĕ çурăла-çурăла кайни те сахал мар пăшăрхантарать пахчаçăна. Мĕншĕн тесен, ун пек пуçсем нумай упранаймаççĕ, тĕрлĕ чирпе чирлесе юнашар ӳсекен пуçсене те сиенлетме пултараççĕ.

Ытларах чух кун пекки нумай вăхăт шăрăх тăрсан е çанталăк нумайлăха çумăра кайсан пулать. Паллах, кун пек пуçсене йăран çинче хăвармалла мар, касса пухса илмелле. Ыттисене - сыввисене "пуçĕсене пăрса" "сиплеме" пулать. Урăхла каласан, купăста пуçĕсене икĕ алăпа тытса кăштах çĕклесе 90 градуса пăрмалла.

Тепĕр меслет те пур: кĕреçене купăста тунинчен 20 сантиметртан пĕтĕм тарăнăшне пусса кĕртмелле те купăстана 4-5 сантиметр çӳллĕш çĕклемелле, унтан кĕреçене кăларса илмелле. Çапла тусан купăстан вĕтĕ тымарĕсем татăлаççĕ, вăл хăвăрт ӳсме пăрахать. Ун патне тутлăхлă япаласем майĕпен çеç пырса тăнăран вăл çурăлмасть. Пуçĕсене касмалла пуличченех аван ларать.



* Уяв юррисем

## Çураçса каяс сасă пур

*Картишĕнчи симĕс курăк,*
*Картишĕнчи симĕс курăк*
*Сысна кулли пулайрĕ,*
*Сысна кулли пулайрĕ.*

*Ял-ялĕнчи сар хĕрсем*
*Каччă кулли пулайрĕç.*
*Хамăр ялсен хĕрĕсем*
*Укçа кулли пулайрĕç.*

*Ял-ялĕнчи каччăсем*
*Кăларса илес сасă пур.*
*Хамăр ялăн каччисем*
*Çураçса илес сасă пур.*

*Ял-ялĕнчи сар хĕрсем*
*Тухса каяс сасă пур.*
*Хамăр ялсен хĕрĕсем*
*Çураçса каяс сасă пур.*

Пухса йĕркелекенĕ Е.ИЛЮШКИНА.


# Пĕлтерӳсем

### Сутатпăр:

*Хапха. Телефон: 5-13-81.*

* * *

*Туй кĕпи, хаклă мар. Телефон: 5-41-86.*

* * *

*Тасатакан сооруженисем патĕнче лайăх гараж. Телефон: 5-26-04.*

* * *

*Усă курнă ОКА-400 касса аппарачĕ, 3 штук - 1-шер пин тенкĕ, лайăх шайра. Изотермăллă будкăран тунă ГАЗ-53 сивĕтекен камера (питĕ лайăх шайра) - 10 пин тенкĕ. Калаçса татăлма пулать. Адрес: Погрузная станци, Пионерская урамĕ, 18. Телефон: 2-23-17 (Погрузная).*

### Тĕрли:

*Сутăн илетĕп: шариклă подшипник 104 Ю, 50х70 сальник. Телефонсем: 5-16-86, 5-24-97.*

* * *

*Хваттер тара илетĕп. Телефон: 5-20-79.*

**Аксеновăн бизнес шкулĕ**
**куçăмлă-куçăмсăр вĕренме пухать.**
**Çак специальноçсемпе:**
- **бухгалтер-экономист - 1çул;**
- **бизнес йĕркелекен мастер - 5 çул.**

**Вĕреннĕшĕн 1100 тенкĕ тӳлемелле.**
**Документсене октябрĕн 23-мĕшĕччен йышăнаççĕ. Адрес: Школьная урамĕ, 22. Телефон: 5-37-51.**

*Анат Камăри хуçалăх расчечĕпе ĕçлекен маммологи центрĕ 1998 çулхи октябрĕн 17-мĕшĕнче сирĕн хулăрти хĕрарăмсен сĕт парĕсен тĕрлĕ чирĕсене сиплет, консультаци, тĕрĕслевсем иртterет, хальхи вăхăтри оборудованипе усă курать (УЗИ, маммограф). Çакă малтанхи диагноз ыйтăвĕсене татса пама, сĕт парĕсен шыçă умĕнхи чирĕсене сиплеме май парать. Сире çак адреспа кĕтетпĕр: Нурлат хули, районти тĕп больница. Ыйтса пĕлмелли телефон: 5-31-96. Лицензи АА 0030, 1996 çулхи июлĕн 18-мĕшĕнче панă.*

*М.Б.Багрянцев врач çынсене эрех ĕçнинчен тата табак туртнинчен пĕр сеансра сиплет.*
*Пирĕн патра кăна!*

*Сеанса пĕтĕмпех анонимлă ирттеретпĕр. Сипленĕ чухне тăванĕсем пулма пултараççĕ. Справка паратпăр. Консультаци, калаçу, каярахри сăнавсем тата кодировани хыççăнхи пулăшу - тӳлевсĕр!*

*Сипленĕ кун, эрнекун, октябрĕн 16, 30-мĕшĕсенче районти культура çуртĕнче 12 сехетре çырăнтару тата калаçу ирттеретпĕр. Лицензи МЗ РФ N00164-30, 1995 çулхи январĕн 16-мĕшĕнче панă.*


## Тупма пулăшăр

**Хуракӳл ялĕнче 1987 çулта çуралнă Кукăркӳлĕнче 4-мĕш класра вĕренекен Ильсур Раилевич Шумаев арçын ачана шыраççĕ. Октябрĕн 1-мĕшĕнче вăл автовокзалта Нурлат-Тĕкĕрмел маршрутпа каякан автобус çине лармалла пулнă. Çӳçĕ хĕрлĕ, хăмăр куçлă. Кăвак куртка, пуçне "петушок" шапка тăхăннă, уринче - симĕс резина атă. Арçын ача çинчен мĕн те пулин пĕлекенсене çак адреспа пĕлтерме ыйтатпăр: Нурлат хули, телефонсем: 5-26-69, 2-11-49 е Хуракӳл ялĕнчи Раиль Ишмаева.**



**Пирĕн юратнă шăллăм, пичче**
**Аркадий Викентьевич**
**ХВАЛЕЕВ**
**сарăмсăр вилни пирки чун-чĕререн хурланни çинчен пĕлтеретпĕр.**
**Тăванĕсемпе çывăх çыннисем.**


Редактор Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухать, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 893. 3851